26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
19
ЭРНЕКУН
61(6298) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхозри пуçламĕш парторганизаци çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă постановлени

Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизаци хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатнине палăртас: парти пухăвĕсем тăтăшах пулса иртеççĕ, 1942 çулта парти ретне 6 çынна илнĕ, коммунистсен пурин те парти поручениийĕсем пур, колхоз активĕн семинарĕсемпе канашлăвĕсем пĕрмаях пулса иртеççĕ, колхозниксем хушшинчи агитациллĕ-массăллă ĕç лайăхланнă. Колхозри парторганизаци колхозниксене социализмлă ăмăртăва анлăн явăçтарнă: бригадăсем тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсем пурте тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен пысăк тухăçлăхĕшĕн, выльăх-чĕрлĕхе малалла ĕрчетсе пырассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Колхоз 1942 çулта ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса ирттернĕ тата государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра тÿлтарнă.

«Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизаци Тамбов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвне вăхăтра йышăнса илнĕ те, колхозниксемпе колхозницăсен политикăллă активлăхне ертсе пырса, танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 1.000.000 тенкĕ пухнă, колхозниксен хăйсен запасĕнчен Хĕрлĕ Çар фондне 1.375 пăт ытла тырă тата ытти продуктсем нумай хывнă. Хулари промышленность предприятийĕсенчи рабочисен апатçимĕçне лайăхлатма колхоз 140 центнер пахча-çимĕç, 500 килограмм аш-какай, 500 килограмм тĕштырă тата ытти продуктсем сутнă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕç туса ирттернĕ: вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех хывса тасатса хунă, хире 9.000 лав ытла тислĕк кăларнă, 310 центнер минераллă удобренисем хатĕрлесе хунă, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай пухнă, 560 гектар çинче юр тытса хăварнă.

Пуçламĕш парторганизаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем те пур. Парти организацийĕ хăй йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине вăхăтра тĕрĕслемест, колхозри комсомол организацине çителĕксĕр ертсе пырать, колхозри çамрăксене ленинла комсомол ретне явăçтарас тĕлĕшпе начар ĕçлет, хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессине сахал çавăрăнса пăхать.

Колхоз çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитессине парторганизаци пурнăçа кĕртеймен: ялхуçалăх машинисене, хăмăт-ĕнерчĕксене тата ытти ялхуçалăх инвентарĕсене юсаса пĕтермен; колхозниксем хушшинче агротехникăна массăллăн вĕрентес ĕçе çителĕксĕр сарса пынă; майракалла шултăра выльăхсене ялхуçалăх ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе кирлĕ пек организацилемен (4 вăкăра кăна ĕçлеме вĕрентнĕ).

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртессишĕн парторганизаци çителĕксĕр кĕрешет, уйхир бригадисенче ĕçе звеносем тăрăх организацилемен, ĕçре хе тата ĕçлекенсен уравниловкăна пĕтермен. Çакна пула 1942 çулта уйхир бригадинче пĕр звено та тĕрĕс тÿлесси çине куçман. Çакна май колхозра пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре стахановла движени начар сарăлса пырать, тĕштырă культурисен тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе панă плана иртнĕ çулта пурнăçа кĕртмен. Колхоз фермисенче выльăхсем вилни пулкаланă, сĕт туса илмелли плана колхоз пĕтĕмпе те 95 процент кăна тултарнă.

ВКП(б) Улатăр райкомĕ «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕ çинчен решенисем йышăннă пулин те, вĕсене мĕнле пурнăçа кĕртнине çителĕксĕр тĕрĕслесе тăнă. Райком секретарĕсем, отдел заведующийĕсем тата инструкторсем çак колхозра пулнă, анчах пуçламĕш парторганизацине ĕçре çителĕклĕ пулăшу паман, уйрăмăнах колхозри комсомол организацине ÿстерес тĕлĕшпе сахал пулăшнă, çавăнпа та комсомол организацийĕ 1942 çулта 5 çынна кăна хăйĕн ретне илнĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнать:**

1. «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацине колхозри пĕтĕм партиллĕ-политикăллă ĕçе çуракине хăвăрт хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе туса пыма хушас, çакна май колхозниксене Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле кăларнă приказра лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле.

2. «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне Титова юлташа çапла тума хушас: колхозри мĕнпур коммунистсене, комсомолецсене тата актива колхоз производствин чи кирлĕ участокĕсенче вырнаçтарса тухмалла, çапла вара коммунистсемпе комсомолецсем пурте, хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе, ытти колхозниксене пример кăтартса пымалла.

3. «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацине парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç çине çавăрăнса пăхма хушас. Парторганизацин партире тăман массăсемпе çыхăнăва тăтăшах çирĕплетсе пымалла, парторганизацин уçă пухăвĕсене туса ирттермелле, колхозниксене обществăллă ĕçе анлăнрах явăçтармалла тата вĕсенчен чи лайăххисене парти ретне активлăнрах суйласа илмелле.

4. «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне Титова юлташа парти пухăвĕсене хатĕрленсе ирттерес ĕçе лайăхлатма, йышăннă решенисене вăхăтра тĕрĕслессине организацилеме, коммунистсене, уйрăмăнах партие çĕнĕрен илнисене, политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе куллен ĕçлеме, вĕсене практикăллă ĕçре пиçĕхтерсе пыма хушас, вĕсем парти политикин тĕп ыйтăвĕсене тата парти хăйĕн членĕсенчен вăрçă вăхăтĕнче мĕн ыйтнине ăнланчăр тесе, вĕсен пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе ĕçлеме.

5. Пуçламĕш парторганизацине колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе малалла вăйлатса пыма хушас. Докладсем, калаçусем тата хаçатсенчи материалсене вуласа тата ăнлантарса пама коммунистсене, комсомолецсене тата чи активлă колхозниксене явăçтармалла, вĕсене бригадăсем, звеносем çумне çирĕплетмелле. Агитаторсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе агитаторсен семинарĕсене тăтăшах туса ирттермелле. Колхозниксене партипе правительствăн чи кирлĕ решенийĕсене çинчен куллен ăнлантарса памалла, вĕсене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштармалла, Хĕрлĕ Çар воинĕсем паттăррăн кĕрешнин примерĕпе колхозниксене кулленхи ĕç нормине тултарма тата ирттерсе тултарма, çураки вăхăтĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлеме мобилизацилемелле. Çураки вăхăтĕнче агитаторсем хăйсем те уйхир ĕçĕсене хутшăнмалла тăвас пулать, вĕсем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçлесе, мĕнпур колхозниксене пример кăтартмалла.

6. Пуçламĕш парторганизацине çапла тума хушас: комсомол организацине ертсе пырассине тата пулăшассине вăйлатмалла, колхозри комсомол организацине лайăх ĕçлекен тумалла, колхоз çамрăкĕсем хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе лайăхлатмалла, вăл ĕçе колхозăн хуçалăх ыйтăвĕсене татса парас енĕпе туса пымалла.

7. Колхозри производствăра тата обществăллă пурнăçра хĕрарăмсен вырăнĕ ÿснине шута илсе, пуçламĕш парторганизацине хĕрарăмсем хушшинче тăтăшах ĕçлеме, ертсе пырас ĕçе вĕсене хăюллăнрах лартма, вĕсенчен чи лайăххисене большевикла парти ретне илме хушас.

8. Колхоз çуракине хатĕрленес ĕçе хăвăртрах вĕçлеме кирли çине парти организацине çавăрăнса пăхма хушас: çывăх кунсенчех ялхуçалăх машинисене, хăмăт-ĕнерчĕксене, урапасене тата ытти инвентарьсене юсаса пĕтермелле.

Кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр колхозăн производство планне туса хатĕрлемелле, производство заданийĕсемпе тырпул тухăçлăхне ÿстермелли заданисене уйхир бригадисемпе звеносем патне çитермелле, вĕсене çÿтсе-явас ĕçе колхозăн мĕнпур членĕсене явăçтармалла.

9. Лашасене пăхса усрас ĕçе татăклăн лайăхлатнипе пĕрлех, ялхуçалăхĕнче майракаллă шултăра выльăхсемпе усă курмалла, çавăнпа та вăкăрсемпе тына пăрусене тата сĕт сахал паракан ĕнесене суйласа илсе, вĕсене халех ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентмелле.

10. Пуçламĕш парторганизацине СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ÿстернĕшĕн колхозниксене ĕçшĕн хушса тÿлесси çинчен» йышăннă постановление пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыма хушас; уйхир бригадисенче пуринче те ĕçе звеносем тăрăх организацилемелле, ĕçри обезличкăна тата ĕçшĕн тÿлессинчи уравниловкăна пĕтермелле, çапла вара колхозниксем хушшинче ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне малалла ÿстерсе пырассишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

11. Колхоз кадрĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлемелле. Сухаçăсене, акакансене вĕрентес ĕçе малалла организацилемелле, çавăн пекех тата колхозниксем хушшинче агротехникăллă вĕрентĕве организацилемелле.

12. ВКП(б) Улатăр райкомĕн секретарĕ Горбунов юлташа «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизацие куллен практикăллă пулăшу парса тăма, уйăх ĕçĕнчи пĕрре кăна мар ВКП(б) ретне çине тата колхозри комсомол организацине лайăх ĕçлекен тăвас ĕç çине уйрăмах çавăрăнса пăхма хушас.

Ĕçри опыта сарас шутпа, ВКП(б) Улатăр райкомне пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсен канашлăвне туса ирттерме, унта «Путь Ильича» колхозри пуçламĕш парторганизаци ĕçĕсем çинчен доклад итлеме хушас.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **И. ЧАРЫКОВ.**

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 17-мĕшĕнчи касхи пĕлтерÿ

Мартăн 17-мĕшĕнче пирĕн войскăсем малтанхи енчеллех çапăçса пынă.

* * *

Мартăн 16-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем тиенĕ 100 автомашинине ытла пĕтерсе тăнă е сиенленĕ, артиллерипе минометсен 22 батарейине пусарнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсем тăшманăн танкĕсемпе пехотин контратакисене сире-сире ярса малалла тапăнса пынă, халăх пуранакан темиçе вуншар пункта йышăнса илнĕ. Пĕр соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан пысăк пунктшăн пынă çапăçура нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшмантан 10 оруди, 60 пулемет тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 60 автомашина тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем Днепр патĕнчи рубежра нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе ярса шыв урлă каçнă та темиçе опорнăй пункта тытса илнĕ.

* * *

Чугуев районĕнче хаяр çапăçусем пулнă хыççăн нимĕçсене сирсе пăрахнă та меллĕ позицисене йышăнса илнĕ. Тăшман 6 хут контратака туса та ниепле ăнăçу та тăвайман. Пирĕн артиллери нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 90 автомашинăна çити, 4 оруди тата тăшман пехотин 2 батальонне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севскран хĕвеланăçнерехре пер кавалери чаçĕ нимĕçсен йышлă танкĕсемпе пехотин атакисене сире-сире пăрахнă. Тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ, çапăçу хирĕнче унăн персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă вуншар танкпа автомашина выртса юлнă. Тепĕр участокра разведка тăвакан пирĕн отрядсем 200 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Ильмень кÿллинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Совет подразделенийĕсем пĕр шыв урлă каçнă та халăх пурăнакан вăйлă тĕреклетнĕ 10 пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен 4 танкне, 5 орудине тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Пирĕн летчиксем пĕр кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 24 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн 3 чугунçул эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени пулнипе икĕ паровоз, горючи тултарнă 8 цистерна, боеприпассем тиенĕ 13 вагон тата 2 çар вагонĕ çĕмĕрĕлнĕ. Çав чугунçул тăрăх поездсем çÿреме пăрахнă.

* * *

Нимĕçсен 177-мĕш пехотнăй полкĕн пĕррремĕш ротин тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Курт Пендель çапла каласа панă: «Иртнĕ çулта Гитлер нимĕç армийĕ умне Атăлпа Кавказа тытса илес задача лартрĕ. Анчах вырăссем нимĕç командованин планне сирсе пăрахрĕç. Нимĕç войскисем Сталинград патĕнче поражени тÿснĕ хыççăн Германин çар машини хавшарĕ. Çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă Паулюс армин мĕлки нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен куçĕ умĕнчех тăрать. Нумайĕшне халь кашни утăмрах çавăрса илнĕ пек туйăнать».

* * *

Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем хуласемпе ялсене çавăрса илсе çунтара-çунтара яраççĕ, халăхăн юлашки апат-çимĕçне, тумтир таврашне тата хаклă япалисене тытса илеççĕ. Çынсене вăйпалах Германие хăваласа каяççĕ. Смоленск облаçĕнчи Потапова ятлă ялта гитлеровецсем колхозниксене пĕтĕмпех çаратнă, хресченсене пурне те хуралласа пырса тыла илсе кайнă. Песочная ялĕнче нимĕçсем вырăнти çынсене пурне те Германие яма сборнăй пункта пухăнма приказ панă. Фашистла тыткăнран хăтăлас тесе хресченсем землянкăсене пытаннă. Гитлерла ирсĕрсем землянка алăкĕсене бензин сапнă та вĕсене вут тивертнĕ. Вутра 130 çын пĕтнĕ, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасем те нумай пулнă.

Мартăн 18-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Мартăн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи енчеллех çапăçса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Игорьевская станцийĕнчен кăнтăртарахра пĕр соединенин чаçĕсем Дебновка ялĕшĕн пынă çапăçура 300 гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тăшмантан 3 оруди, 8 миномет, 34 пулемет тата 28.000 патрон тытса илнĕ. Кÿршĕри участокра пирĕн подразделенисем хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсен вăйлă тĕреклетнĕ опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен шутĕнче нимĕçсен 4 танкĕ тата боеприпассен склачĕ пур.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем ăнăçлăн тапăнса пырса халăх пурăнакан 32 пункта тытса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ чухне пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсенчен 10 орудипе миномет, 28 пулемет, 2 радиостанци тата боеприпассем тиенĕ темиçе вуншар лав тытса илнĕ. Тепĕр участокра тăшман пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Пирĕн подразделенисем пыра-пыра çапнипе нимĕçсем пĕр йеркесĕр каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 400 салтакпа офицер вилсе е аманса юлнă.

* * *

Чугуев районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Пĕр соединенин чаçĕсем тăшман хаяррăн атакăланине сирсе пăрахнă та контратакăна куçса нимĕçсене халăх пурăнакан паха пунктран хĕссе кăларнă. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманăн пирĕн оборона ăшне кĕрсе кайнă 7 танкне тата 100 яхăн нимĕç автоматчикне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севскран хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пирĕн позицисене темиçе хут та штурмланă, анчах та кашнинчех пысăк çухатусем тÿссе каялла чакмалла пулнă. Нимĕçсен 11 танкне тата тăшманăн пехотине 2 ротăран кая мар пĕтерсе тăкнă.

* * *

Львов облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ февраль уйăхĕнче нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушени вăхăтĕнче тăшманăн 100 яхăн салтакĕпе офицерĕ вилнĕ е аманнă. Львов облаçĕнчи партизансен ытти отрячĕсем тăшманăн горючи тиенĕ 2 эшелонне тата боеприпассем тиенĕ 3 эшелонне ÿпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 585-мĕш пехотнăй полкĕн штабной ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Феликс Высоцкий çапла каласа панă: «Иртнĕ çулхи декабрьте пирĕн дивизие Франциререн Российăна илсе килчĕç. Салтаксен кăмăлĕ питĕ хуçăлнăччĕ вара. Офицерсем пур майсемпе те хăйсен подразделенийĕсен шухăш-кăмăлне хăпартма тăрăшатчĕç. Пирĕн дивизи ăçтан иртсе каять, унта нимĕн те юлмасть, нимĕн те тÿсеймест, курăк та ÿсми пулать, тетчĕç пире. Çапла мăнаçланнин результачĕсем питĕ йывăр пулчĕç. Икĕ эрне хушшинче пирĕн полкри çынсенчен 60 процент пĕтрĕ. Хĕçпăшала тата çар хатĕрĕсене пăрахса, эпир каялла чакрăмăр. Салтаксемпе офицерсем хăйсен çилли-пăшшине халăха асаплантарса шăнарчĕç. Офицерсем çуртсене çунтарса яма тата çыннисене хăваласа кайма хушатчĕç. Пирĕн ротăра ефрейтор Милх тата Круцманпа Лютц салтаксем халăхран сав тери мăшкăллатчĕç».

* * *

Ростов облаçĕнчен хăваласа кăларнă нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пур çĕрте те хăйсен юнлă тискерлĕхĕсен йĕррине хăварнă. Зерноград поселокĕнче тата Мечетинская станцинче нимĕçсем колхозниксемпе служащисен нумай çемьисене пусса тухнă. Зерноградра гитлеровецсем поселок совечĕн председательне С. Бабенкона вĕлернĕ. Совета хирĕçле заявлени çине алă пуссан бандитсем ăна çăлса хăварма пулнă. Совет патриочĕ çав тискер сĕнĕве çиленсе сирсе янă. Мечетинскаяран нимĕçсем «Красный партизан» колхозăн председательне Иван Миненкона, Михаил Скрипко служащие, Федор Борисов кассирпа унăн ывăлне, Антонина Диденко колхозницăпа унăн кăкăр ачине, станицăри урăх çынсене те персе пăрахнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Генерал-полковник А. А. Новикова авиаци Маршалĕн званине парасси çинчен

Авиаци генерал-полковникне Александр Александрович **Новикова** çар званийĕ — авиаци Маршалĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулти мартăн 17-мĕшĕ.

В. М. Молотов юлташ Канада посланникне Д. Уилгрет господина йышăнни

Мартăн 17-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Канадăн СССР-ти Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй министрне Д. Уилгрет господина йышăннă.

Шкул ачисен çуркуннехи каникулĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ шкул ачисен çуркуннехи каникулĕсене ирттересси çинчен постановлени йышăннă.

Вăтам шкулăн 1—10-мĕш класĕсенче вĕренекенсен çуркуннехи каникулĕсем 6 кун хушши пулмалла. Хулари шкулсенче вĕренекенсен каникулĕсем мартăн 25-мĕшпе 31-мĕшĕ хушшинче иртмелле.

Яллă вырăнсенчи шкулсенче вĕренекенсен каникулĕсен вăхăтне райисполкомсем палăртаççĕ. Вĕсем вăйлă шывшур вăхăтĕнче иртмелле.

Шупашкар хулинчи МОПР активĕн пухăвĕ

Мартăн 17-мĕшĕнче каçхине Хĕрлĕ Çар Çуртĕнче Париж Коммуни 72 çул тултарнă ятпа тата МОПР кунĕ ячĕпе хулари мопровецсен активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва МОПР Обкомĕн председателĕ Г. Платонов юлташ уçрĕ. Президиума хулари активлă мопровецсене суйларĕç.

Пуху участникĕсем тăваллăн алă çупса хисеплĕ президиума ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Сталин юлташ ертсе пыракан Политбюро составне суйларĕç.

Париж Коммуни 72 çул тултарни тата МОПР кунĕ çинчен партин хула комитечĕн лекторĕ Шапиро юлташ доклад турĕ.

Мопровецсен активĕн пухăвĕ хулари МОПР организацийĕсен ĕçне малашне лайăхлатмалли мероприятисене палăртрĕ.

Мопровецсен активĕ валли Чăвашсен Государство Академи Театрĕнчи тата Хĕрлĕ Çар Çуртĕнчи артистсен вăйĕпе концерт пачĕç.

Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене пулăшассине вăйлатмалла

ШАХАСАН. (Хамăр корр.). Вăрçă пуçланнăранпа районра фронтовиксен çемьисене 2.873.539 тенкĕ пособи парса пулăшнă. Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене 5.185 кубометр вутă турттарса панă, 736 метр трикотаж, 39 мăшăр кĕпе-йĕм, 36 ваткăллă пальто, 57 мăшăр çăматă панă. Фронтовиксен 47 ачине ача сачĕсене вырнаçтарнă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе уйрăмăнах Ухманти «Победа», «Заря», Тельман тата Киров ячĕсемпе тăракан колхозсем аван ĕçлеççĕ.

Тельман ячĕпе тăракан колхозра 1942 çулта фронтовиксен çемьисемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çемьесене пахча-çимĕçсем лартса хăварма пулăшнă. Вăрлăх çуккисене сĕрулми вăрлăхĕ тупса панă. Вĕсене çителĕклĕх вутă хатĕрлесе панă.

Ухманти «Победа» колхоз пĕлтĕр фронтовиксен çемьисене 228 центнер тырă парса пулăшнă.

Анчах хăшпĕр колхозсемпе ялсовечĕсен руководителĕсем фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе тивĕçлипе ăнланса илмен-ха.

«Красный партизан» колхозра эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ Гинзбург юлташ хăйĕн икĕ ачипе тата 72 çулхи ватă амăшĕпе пурăнать. Унăн пурнăçпа йăла условийĕсем начар. Анчах ялсовечĕпе колхоз ăна тивĕçлипе пулăшман.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе Чуракасси, Матьшÿри, Шĕкĕр, Анат Вăрманъял ялсовечĕсенчи колхозсем те начар ĕçлеççĕ. Уйкас Кипек, Атнаш, Энтриял, Кипеч ялповĕсем эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене çăкăр, тăвар тата ытти продовольстви йĕркеллĕ парса тăмаççĕ. Эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене памалли япаласене лавкара сутакансем вăрлани те пулкаланă.

Фронтовиксен çемьисен жалобисемпе заявленийĕсене пăхса тухас ĕçре те çитменлĕхсем пур. Райуполнаркомзаг Михайлов фронтовиксен çемьисен жалобисене пăхса тухмасăр пĕр уйăх ытла тытса усрать ĕнтĕ.

Çар çыннисен çемьисемпе эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн пĕтĕм общественноçăн тăрăшмалла. Шăхасан районĕнчи колхозсен руководителĕсен ку ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле.

В. Веселов.

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНСЕ КĔТСЕ ИЛЕР

Колхозсем вăйлă тырпул туса илессишĕн ăмăртăва тухаççĕ

ÇĔМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсенче партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине сÿтсе-явасçĕ. Çав чĕнĕве сÿтсе-явнă май кашни колхозпа бригада тата уйрăм звеносем, кăçал хуть те мĕнле çанталăк тăрсан та вăйлă тырпул туса илме пулса, социализмлă ăмăртăва тухаççĕ.

Тури Кăмашари «1-ое мая» колхоз членĕсем партипе совет тата колхоз активĕн республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине тĕплĕн сÿтсе-явнă хыççăн хăйсен умне кăçал гектартан вăтам шутпа 16,3 центнер тыр-пул туса илес задача лартрĕç. Уйрăм культурăсенчен: ыраш — 16 центнер, сурхи тулă — 17 центнер, пăрçа—17,5 центнер, вика—20 центнер, сĕлĕпе хуратул—16-шар центнер, пĕтĕм вăрринпе сÿсне—5-шер центнер тата çĕрулми 120 центнер туса илме пулчĕç.

Колхоз членĕсем вăйлă тырпул туса илес тесен çĕре лайăх çемçетмеллине тата пĕтĕм ĕçе агротехника правилисем хушнă пек туса пымаллине лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа вĕсем кăçал уя 1.000 тонна тислĕк (вăл шутран хăйне 900 тонна), 450 тонна торф, 60 центнер кĕл, 15 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ кăларма, çитес çуракинче пур вăрлăхсене те тĕплĕн сортласа, протравить туса акма, 40 гектартан кая мар яровизациленĕ акма, пĕтĕм çурака ĕçне 9 кун хушшинче вĕçлеме пулчĕç.

Кусемсĕр пуçне тата колхозниксем тырăсене апат парас, çумлас, выльăх-чĕрлĕх тĕлĕшпе те конкретлă обязательствăсем илеççĕ. Выльăх чĕрлĕх тухăçлăхне хăпартас енĕпе кашни ĕнерен 1.300 литр сĕт, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, 100 сурăхран 115 путек тата кашни сысна аминчен 12 çăвăртан кая мар илме палăртаççĕ.

— Вăрçă вăхăтĕнче кашнин фронтри пек ĕçлемелле. Эпир çултален хушшинче 250 ĕçкунĕнчен кая мар тума пулатпăр, — терĕç пухура колхозниксем. Вĕсем Анат-Кăмашари «Красный пахарь» колхоз членĕсене ăмăртăва чĕнчĕç.

Хутарти «Ленин ячĕпе» тăракан колхоз Турханти «Комбинат» колхозпа ăмăртăва тухрĕ. Вăл хăй çине кăçал кашни гектартан ыраш, сĕлĕ, кĕрхи тулă — 15-шер центнерган кая мар, пĕтĕм сÿсĕ—5 центнер, пĕтĕм вăрри — 4 центнер, кантăр сÿсĕпе вăррине 4-шар центнер, клевер, вика — 20-шер центнер, çĕрулми 120 центнер, купăста 320 центнер, помидор 150 центнер, кишĕр — 155 центнер туса илме обязательство илчĕ. Çуракин ĕçĕ пĕр эрне хушшинчех вĕçленмелле, пĕтĕм çерулмине лайăх вăррăх тата машинăпа акмалла. Колхозниксем хăйсен хисепне 15.000 лав тислĕк, 200 центнер кĕл, 250 центнер минерал удобренисем, 10 тонна тислĕк шывĕ тăкма пулчĕç.

Çакăн пек обязательствăсем ытти колхозсем те илеççĕ. Кашниннех вĕсен пĕр тĕллев — кăçал пĕлтĕрхинчен нумай ытларах тырпул туса илесси, тăван Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç парасси.

Верховнăй Главнокомандующи Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа панă приказпа паллашнă хыççăн чылай колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатрĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Ударник», «Молодая сила», «1-ое мая» колхозсем, çак çуракине тухма хатĕр. Ку колхозсенче вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе сортланă тата шăтарса пăхнă, ялхуçалăхĕн мĕнпур инвентарне юсаса лартнă, лаша тавраšсемпе кÿлмелли хатĕрсем те çителĕклĕ таран пур. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ежов юлташ) 17 плуг, 27 сÿре, 2 сеялка тата 26 урапа юсанă, ялхуçалăх машинисене ытларахсах уйрăм сарайне лайăх вырнаçтарса лартнă. Колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан 100 пăтран кая мар тыр-пул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

«1-ое мая» колхозăн ирттерĕ çулта ялхуçалăх машинисем юсавлă мар пулнă пирки çураки ĕçĕ вăрăма тăснă. Кăçал ку çитменлĕх ан пултăр тесе колхозниксем тимлесех пур кирлĕ машинăсене те юсаса лартрĕç. Халĕ унăн 45 урапа, 22 плуг, 12 сÿре, 2 сеялка тата лаша тавраšсем ситĕлĕклех пур.

Х. Лисин.

Комсомолецсемпе çамрăксен районри канашлăвĕ

ÇĔМЕРЛЕ, мартăн 16-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Мартăн 14-мĕшĕнче кунта ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан çамрăксемпе комсомолецсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта 240 çамрăк пухăнчĕ. Канашлу комсомол активĕпе ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан çамрăксен республикăри канашлăвĕ чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕ.

Канашлура тухса калакансем хальхи колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕç. «Лесной огонек» колхозри комсомол организацин секретарĕ Перов юлташ юлашки вăхăтра çамрăксен политикăллă активлăхĕ ÿсĕлнесе пыни çинчен каларĕ.

— Икĕ уйăх хушшинче пирĕн колхозри комсомолăн пуçламĕш организацийĕ 9 çамрăка комсомол ретне илчĕ,—терĕ Перов юлташ.

«Майăн 1-мĕшĕ» колхозри комсомол организацин секретарĕ Исарова юлташ комсомолецсем колхоза вăрлăх тупса пама пулăшни çинчен каласа пачĕ.

Канашлăва пухăннă комсомолецсемпе çамрăксем республикăри канашлу чĕнсе каланине ырласа йышăнчĕç. Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче хастарлăн ĕçleme пулса обязательствăсем илчĕç. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ ХАЛĂХ ПУРĂНАКАН ПУНКТСЕНЕ ТАСАЛĂХРА ТЫТАССИШĔН

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри хуласемпе халăх пурăнакан пунктсене тасалăхра тытса тăмалли мероприятисем çинчен постановлени йышăннă.

Совнарком хуласемпе районсен совечĕсен исполкомĕсем, уйрăмах Шупашкар, Çĕмĕрле тата Етĕрне хула совечĕсен исполкомĕсем, хуласемпе тата халăх пурăнакан пунктсене тасамарлăхран тасатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Çуркуннехи шывшур вăхăтĕнче республикăри хуласемпе ялсене санитари тĕлĕшĕнчен кирлĕ пек таса лăхра тытса тăрас тесе тата сикелен чир-чĕртен сыхланас шутпа, Совнарком 1943 çулхи мартăн 15-мĕшĕнчен апрелĕн 15-мĕшĕ хушшинче хуласемпе халăх пурăнакан пунктсене тасатма хушнă.

Хуласене тата халăх пурăнакан пунктсене тасамарлăхран тасатнă çĕре унта пурăнакансене anлăн явăçтармалла. Кунсăр пуçне хуласене тата хутăшлăх ĕçе сывлăхшан тăпăнассинчен сыхлама тунă вырăнти командăсенче тăракансене хутшăнтармалла.

Промышленноçть предприятийĕсенпе уйрăм организацисен транспорчĕпе тасамарлăха турттарса тухнă çĕрте усă курмалла.

Тасамарлăха подсобнăй хуçалăхсен, рабочисемпе служащисен пахча вырăнĕсене, çывăхри колхозсемпе совхозсен уйхирĕсене тата госсанинспекци кăтартнă тăрăх пăрахсан мĕн тĕрлĕ вырăнсене турттарса тăкмалла.

Ют çĕршывсенче

США вице-президенчĕ Уоллес Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусем çинчен калани

ВАШИНГТОН, мартăн 15-мĕшĕ. США вице-президенчĕ Уоллес США-ра Совет Союзĕ хушшинчи пресс-конференципе çапла каланă: çыхăнусем питĕ тусла, тенĕ. Çак самаха Уоллес корреспондентсем çапла ыйту панă хыççăн каланă: Совет Союзĕпе Америка хушшинчи хальхи çыхăнусене шута илсен, вăрçă хыççăнхи ытти çĕршывсем США Совет Союзĕ калаçу пуçласа яма пултарать-и?—тесе ыйтнă пулнă унран. Малалла Уоллес çакна палăртнă: Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусенче йывăрлăх пурри çинчен эпĕ илтмен, тенĕ. Пĕтĕмпех урăхла, Совет Союзĕпе Америка хушшинчи çыхăнусем питĕ тусла. Корреспондентсенчен пĕри, юлашки вăхăтра Уоллес вырăсла вĕренни çинчен пĕлтернĕ пирки, унтан çапла ыйтнă: Уоллес Совет Союзне кайса килме шутламасть-и?—тенĕ. Уоллес çапла ответленĕ: Совет Союзне кайса килме эпĕ питĕ хавас, анчах та хăлĕ унта кайма шутламастăп-ха, тенĕ.

Францин наци комитечĕпе генерал Жиро тухса калансем тавра

ХЭЛЛ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Франципе иреке кăларассишĕн кĕрешме хатĕр тăракансемпе пурине те пĕрлешсе ĕçлеме пулни çинчен генерал Жиро тунă заявлени пирки США государственнăй секретарĕ Хэлл пресс-конференципе паян çапла каланă: «Жиро генерала Çурçĕр Африкăра кĕрешекен Франци войскисен главнокомандующийĕ вырăнне лартнипе Америка правительстви шанса тăнине генерал Жиро тĕрĕсе кăларчĕ. Çара вăл ертсе пынипе французсен пур ушкăнĕсене те пĕрлештерсе мар пулĕ. Çакă ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе каялла таварас ĕçе çĕнтерÿлĕ Франци хăйне тивĕçлĕ вырăн парĕ», тенĕ.

Хэлл малалла çапла каланă: вăрçă ĕçĕсене сиен кÿмесĕрех, хăй тытса тăракан территори çинче Жиро хаклĕ çынсене тĕрлĕ условисенче тытас йĕркене пĕтерме пултарать ĕнтĕ, тенĕ.

Юлашкинчен Хэлл çакна палăртса хăварнă: Жиро «Франци республикăллă йĕркепе йăласене хирĕç пырақан законсемпе декретсене пăрахăçа кăларчĕ», тенĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ТУНĂ ЗАЯВЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерĕ тăрăх, Черчилль паян парламентра çапла каланă: Англи правительстви Жиро генерал çăмахне, пуринчен ытла вăл Виши «правительстви» Германипе тунă перемирие йышăнманни çинчен пĕлтернине тата 1940 çулхи июнĕн 22-мĕшĕ хыççăн тухнă законсене пăрахăçа кăларасси çинчен пĕлтернине ырласа саламлать.

Генерал Жиро сăмахĕнчен тата Францин наци комитечĕ тунă заявленирен çакă палăрать: французсен çак икĕ ушкăнне уйăрса тăракан принциплă ыйтусем урăх çук пек курăнать. Эпĕ çак заявление тăвасси çинчен США правительстви пĕлтертĕм. Вăл заявление США правительстви тĕппипех килĕшет тесе шутлама манăн пур çăлтавсем те пур.

Малалла Черчилль çапла каланă: «Муниципальнăй собранисемпе муниципальнăй советсем хăйсен ĕлĕкхи вырăнне каллех йышăнĕç, вĕсен членĕсене халăх суйламалла пулĕ тата мусульманпа еврей халăхĕсем валли уйрăм режим тунине пĕтересси çинчен Жиро йышăнни» Англи правительстви çавăн пекех саламлать, тенĕ.

ИДЕНПА УЭЛЛЕС ТĔЛ ПУЛНИ

ВАШИНГТОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Иден США-ри Британи посолĕпе Галифакспа пĕрле США государственнăй секретарĕн заместителĕ патне — Уэллес патне пырса кайнă. Мартăн 14-мĕшĕнче Иден Шурă Çуртра апатланнă.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇЕСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Седженани районĕнче союзниксен войскисем пăртак малалла куçнă, противник вĕсене хирĕç тăман.

ТУРИ САВОЙĂРИ ОСАДНĂЙ ПОЛОЖЕНИ

ЖЕНЕВА, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Францирен илнĕ хыпарсем тăрăх, восстани тунисен сăртсенчи ĕçсене пула, Виши влаçĕсем Тури Савойăра осаднăй положени туса хунă.

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Тури Савойă сăрчĕсенче кĕрешекен Франци партизанĕсем Тонон хули çывăхĕнче нимĕçсен 3 самолетне персе ÿкернĕ, вĕсем партизансен позицийĕсене çине бомбăсем пăрахма пынă пулнă. Партизансен отрячĕсен пуçĕнче Франци офицерĕсем тăраççĕ. Вĕсене французсен Альп стрелоксен командирĕ пулнă генерал Картье ертсе пырать.

Тури Савойăри Виши полицийĕн çĕнĕ отрячĕсем пыраççĕ. Партизансем кĕрешекен пĕтĕм сăртлă района полици чаçĕсем çавăрса илнĕ. Апла пулин те французсен нумай патриочĕсем сăртсем çине тараççĕ.

Тури Савойăри ĕçсем çинчен Англи хаçачĕсем нумай çыраççĕ. «Франципе сывлăш хĕрсех пырать, — тесе çырать «Таймс» хаçат. — Нимĕçсем хăйсен Франци войскисен хисепне чакарнă чухне Франци халăхĕ оккупантсене хирĕç кĕрешсе пырасси вăйланать те ĕнтĕ».

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла калать: Францире «Вăртăн ĕçлекен организацисем нумай, вĕсен членĕсем пĕтĕмпех восстани сехечĕ çапаччен пытанса пурăнаççĕ-ха. Çав сехете хăвăртрах çаптарасси союзниксенчен килет, мĕншĕн тесен шалти вăрçă мĕн чухлĕ малтан хăярах пулать, тулашĕнчен тапăнса кĕме çавăн чухлĕ майсем ытларах пулаççĕ», тенĕ.

ТУЛОНРИ ПЕТЕМĔШЛЕ ЗАБАСТОВКА

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланă тăрăх, Алжирти радио çапла пĕлтернĕ: нимĕç оккупанчĕсем рабочисен пĕр ушкăнне арестленине хирĕç протестлесе, Тулонра рабочисем пĕтĕмĕшле забастовка тунă.

ÇУРАКИ ÇЫВĂХАРСА КИЛНИНЕ ТУЙМАÇÇĔ

ТАВАЙ. (Хамăр корр.). Çĕнĕ Тăрмашри «Мартăн 8-мĕшĕ» колхозра çĕл те çуракине хатĕрлеме кирлĕ пек тытăнман-ха. Колхоз председателĕ И. Евдокимов юлташ çак ответлă ĕçе япăх ертсе пырать. Колхоз транспорт инвентарьне юсама тытăнман, хирте пĕр гектар çинче те юр тытса хăварман. Çавăн пекех вăрлăхсене тасатасси, шăтас пахалăхне тĕрĕслесси те юлса пырать, хире паянхи куна çитсе те тислĕк 655 лав çеç кăларнă.

Пирĕн земляк Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов юлташ пĕр заводри стахановкăсемпе хушшинче.

МТС-а сарайсем тума пулăшаççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Центрта тухакан хаçатсем нумаях пулмасть Пенза облаçĕнчи Чемберски районри колхозсен паха пуçарăвĕ çинчен çырса пĕлтерчĕç. Чемберски районри колхозсем хăйсен районри МТС-не тракторсемпе ялхуçалăх машинисен лартмалли сарайсем тума пулăшаççĕ.

Пирĕн республикăри МТС-сен те ялхуçалăх машинисене хĕллехи вăхăтра усрама сарайсем çитмеççĕ. Çав сарайсене тума МТС-а пулашни кирлĕ. Пенза облаçĕнчи колхозсенчен пример илсе, Сталин ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх машинисене лартмалли сарай тума Комсомольски МТС-а 15 кубометр йывăç касса турттарса пачĕ. Кунсăр пуçне колхоз хăма çуракан завод патне 50 кубометр йывăç турттарса пама тата хăма çурма икĕ колхозника уйăрса пама пулчĕ.

В. Андреев.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

Çĕршыв пехиллени

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Пачĕ мăшăр сунат.
Çитмĕл çичĕ çĕр урлă çул хыв,
Çуллĕре ан çухат.

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Пачĕ паттăр хăват.
Ан пулах эс хăравçă çерçи,
Пул хăватлă хăлат.

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Пачĕ хай тивĕçне.
Амăрткайăк пул,—сывлăш хуçи,
Эс çуралнă вĕçме.

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Пачĕ çулăм-чĕре.
Ан ман эсĕ, санпа, паттăр çын,
Çĕршыв чапĕ çĕрет.

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Ыхравларĕ тăрса:
Ывăлăм, ку вăл халăх вăрçи,
Тух çак юнлă вăрса.

Ентĕ аслă аннемĕр — çĕршыв
Пехиллерĕ сана:
Пурнăç кÿр çĕршыва, паттăр çын,
Вилĕм кÿр — тăшмана.

1. Ачалăх

Ачалăхăм, ачалăх,
Амасури — куççул!
Эс, ĕмĕр асăнмалăх,
Тăктартăн-çке куççуль.

Тăйлăк-тайлăк чалăш пÿртĕн
Хисеп çук ялта.
Ун çине пăхаççĕ тÿртĕн,
Пĕтнĕ пек йăлтах.

Кантăксене — шур илнĕ,
Тÿпинче — маян.
Е татах-и, шелсĕр вилĕм,
Килтĕн эс паян?

Е татах татса каясшăн
Çак çуртран парне?
Амăшне Хветут йăвашшăн
Ÿкĕлтет: — Анне!..

Эс лăплан, ытла ан тарăх,
Питех ан кулян.
Эп каям,—тет,—ял-йыш тăрăх,
Çут тĕнче — пуян.

Амăшĕ ун чирлĕ, выçă,
Куççульпе тулать.
Ывăлне асатнă хыççăн
Йынăшса юлать.

Урлă сак çине вăл выртнă,
Тен ĕмĕрлĕхех.
Хупăнать хапха ав хыттăн.
Çил хапхи пекех.

Çут тÿпе те питĕ тăрă,
Анчах çил ăçтан?
Ку чупать Хветут ял тăрăх.
Пĕчĕк çилтăман.

Унăн саплăклă сăкманĕ
Вĕл-вĕл вылянать.
Анатра пурнать хăй майăн
Тăлăх Уляна.

Куççăр кинеми вăл, мĕскĕн.
Пит хĕрхенмелле.
Çавăнпа çÿреççĕ ниххĕн
Кĕлеме пĕрле.

Хветут ситрĕ: — кинемейĕм,—
Терĕ вăл, — касан,
Эп ĕнер те хилеймерĕм,
Тен, паян хаяр.

Анне питĕ аптăрарĕ,
Вилес пек выртать.
Хăман та касать-çке варăм,
Хăйăк çеç пырта. —

— Юрĕ кайăпăр, ан хуçăл, —
Кинеми вăл лăпкать.
Пĕчĕкçĕ Хветутăн куçĕ
Таранăн пăхать.

Ак вĕсем хутаç çакаççĕ, —
Пурнăç çырми мар.
Турă ячĕпе тухаççĕ
Çăкăр ыйрама.

Аçта кайăн? Аçта янтă
Сăкăрпа тăвар?
Ямаш кăр тăван ял та,
Чунĕ тăван мар.

Ялта ентĕ йăлăхтарнă, —
Каймалла юта.
Ак утаççĕ их мăнтарнă,
Икĕ шур хутаç.

Тухăррийĕ Чаканарĕ,
Пакăш, Кăмаша...
Пур çĕрте те пĕрех мар-и
Выçлăхпа нуша?

Илĕртмест уйри Мăн Вылă,
Ыхăрмасть Сăнар.
Ах, анчах пĕр ĕмĕт вăйлă —
Выçă вилес мар.

Çавăнпа вĕсем утаççĕ
Çулсăрах уйпа.
Калаçаççĕ, пусараççĕ
Мăшкăлпа хуйха.

Çавăнпа вĕсем утаççĕ
Пĕкĕртсе пуça.
«Кĕлмĕçĕн» ылхав хутаçĕ
Кăмăла хуçать.

Çурăма çăмăл пулин те,
Ывăр вăл чуна...
Пĕчĕкçĕ Хветутăн питĕ
Чун-чĕри çунать.

Мĕншĕн-ха каплах телейсĕр?
Мĕншĕн çук хисеп?
Кăмаша ялне кĕреççĕ
Ерипен вĕсем.

Таçтах сарлăн хăватлă
Аш кашки шăрать.
— Паяна чун усрамалăх
Çăкăр памăр-ши?..

Хĕррипчи çуртран пусласçĕ:
Çак кĕвве вĕсем.
Кунтан лăпкăн асатаççĕ:
— Тур патăр! — тесе.

Иккĕмĕш çуртра пыраççĕ:
Ырă çын пулмн?!
Кунта шăппăн тыттараççĕ
Писнĕ çĕрулми.

Виççĕмĕш çурта пыраççĕ,—
Çÿлĕ кантăксем!—
Шалтлатăса хупăнаççĕ
Хăйсемех вĕсем.

Йĕркерен çапла тухаççĕ
Çук тĕлл-палли.
Ыр çынсем çапах параççĕ
Хыт çăкăр чĕлли.

Анчах хушăран сасартăк,
Çăкăр ыйрине,
Чул хурса парас пек катăк
Тиршĕм ал çине.

Ывăтмасть Хветут ахаллĕн
Мăшкăллă чула.
— Улĕм,—тет вăл,—асăнмалăх
Чул кирлех пулать.

Кервен çурт çине пăхать вăл
Сивĕ куçпе:
— Халлĕхе эс, чăн, хăватлă,
Анчах ÿсĕп эп.

Хăй хĕвнех чиксе вăл хучĕ
Çав хура чула:
— Пуçна пултăр, мур, хăй хурчĕ,
Харампыр кулак!..

Çакна сисрĕ-мĕн хай лешĕ, —
Хăйĕн пекех
Кулак хушрĕ вĕслетмешкĕн
Сăнчăр йыттине.

Унтан кăшкăрчĕ вăл: — тытăр,
Вăр-хурахсене!
Сиксе ÿкрĕ мăнтăр йытă
Тăлăхсем çине.

Юрать ырă халăх пулчĕ,
Çăлчĕ вĕсене.
Ĕмĕр манăçми çак юлчĕ
Тăлăх чĕрине.

Тăшмансемшĕн ентĕ — чул ун
Хĕвĕнчех выртать.
Ялкăшать хаярлăх — çулăм
Çамрăк кăкăрта.

(Малалли пулать).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательстă юн конторин—0—23.

НТ 988

Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 и.

СССР Промышленность банкĕн Чăваш республикăнчи конторине инженер-строитель, машинистка, бухгалтерсем, кредитнăй инспекторсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 27 (Госбанк çуртĕ).
—1.